26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ОКТЯБРЬ
29
ЭРНЕКУН
215(6452) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Татах та лайăхрах ĕçлер!

Республикăри колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлесе пыраççĕ. Ку тĕлĕшпе иртгернĕ фронтовой уйăхлăх чылай пысăк ӳсĕмсем тума пулăшрĕ. Октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне республика патшалăха тырă памалли плана 81 процент ытла тултарчĕ, аван çапмалли плана 99 процент ытла пурнăçларĕ. Малта пыракан Етĕрне, Вăрнар, Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар, Калинино, Вăрмар, Канаш районĕсем тырă памалли плана пĕтĕмĕшпех тултарчĕç. Вăрнар, Йĕпреç, Красноармейски, Кувакино, Первомайски, Шупашкар, Çĕмĕрле, Етĕрне районĕсем е республикăри 1676 колхозран 1413 колхозĕ аван çапса пĕтерчĕç.

Çапла пулин те лăпланса ларма иртерех-ха. Хĕрӳ ĕçсен вăхăчĕ иртмен-ха. Пирĕн республика патшалăха тырă памалли плана халĕ те тултарман. Кĕрхи çĕртме тăвас ĕç вара пачах та çителĕксĕр пулса пырать, плана октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне мĕнпурĕ те 63 процент кăна тултарнă. Вăрлăхлăх акнă куракĕсене 5,1 процент кăна пухса илнĕ. Йĕтĕн-кантăра шыва хутса пултарас, хире тислĕк кăларас ĕçсем çаплах юлса пыраççĕ.

Уйрăмах Тăвай, Октябрьски районсем çинчен чарăнса тăмалла. Ку районсен ялхуçалăхĕнчи мĕнпур ĕçсене ăнăçлăн туса пыма пур условисем те пур. Тырă начар пулнă, лашасем çитмеççĕ е машинăсем çителĕксĕр тесе ларма кунта нимĕнле сăлтав та çук. Апла пулин те патшалăха тырă памалли плана Тăвай тата Октябрьски районсем тултараймаççĕ, ăмăртура кайра пыраççĕ. Фронтовой уйăхлăхра çак районсем уйрăмах тырă хатĕрлес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлерĕç. Сăмахран, уйăхлăх пуçлансанах Октябрьски район республикăра 9-мĕш вырăн йышăннă пулсан, халĕ 17-мĕш вырăна анса ларчĕ. Фронтовой уйăхлăх хушшинче çулталăкри плана мĕнпурĕ те 6 процент чухлĕ кăна пурнăçа кĕртрĕ. Аван çапас тĕлĕшпе те Октябрьски тата Тăвай районĕсем начар ĕçлеççĕ.

Çак районсем кая тăрса юлнин сăлтавне ăнланса илме йывăрах мар. Вырăнти йывăрлăхсене çĕнтерме, ĕçри тĕрлĕ майсемпе усă курма пĕлменни, колхозниксене тата туртăм вăйне вырнаçтарса тăратма пĕлменни, вăхăт тата лару-тăру улшăннă май ĕç меслечĕсене улăштарса пыма пĕлменни çак районсенчи организацисен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕх пулса тăрать. Уйрăмах колхозниксем хушшинчи агитациллĕ-массăллă ĕçе хакламанни çак районсенче хытă палăрать. Нумай колхозсенче хаçат-журналсем тупса вулама çук, вĕсене колхоз председателĕсем илеççĕ те колхозниксене вуласа кăтартмасăрах пытарса хураççĕ. Радио итлеме майсем тăвас тесе тăрăшмаççĕ. Агитаторсен ĕçне йĕркелесе, ертсе пымаççĕ.

Акă, халĕ малта пыракан колхозсем 1944 çулшăн патшалăха аванспа тырă параççĕ. Вĕсем Хĕрлĕ Çарăн боецĕсем яланах тутă пулччăр тесе тăрăшаççĕ. Çак калама та çук паха ĕçе административлă йĕркепе, распоряженисемпе приказсем çырса тума май çук. Ку ĕçĕн ăнăçлăхне пирĕн большевикла агитаци, пирĕн тылри ĕçсем фронтпа мĕнле çыхăнса тăнине ăнлантарма пĕлни татса парать. Партипе совет тата комсомол организацисен кашни килограмм тырă тăшмана çĕнтерме пулăшни çинчен колхозниксене анлăн ăнлантарса парас пулать. Çакна вара чылай çĕрте ăнланмаççĕ. Тырă хатĕрлес ĕçе çаплах административлă майсемпе туса пыма пăхаççĕ.

Фронтовой уйăхлăх вĕçленчĕ. Республика çак уйăхлăх хушшинче сахал мар ĕçсем туса ирттерчĕ. Анчах туса çитермен ĕçсем те юлчĕç-ха.

Патшалăха тырă памалли плана тултарма пирĕн республикăн пур майсем те пур. Обязательнăй йĕркепе памалли тырра патшалăха çак кунсенчех парса татас пулать, государствăна авансла тырă парассине вăйлатсах пымалла. Тăван çĕршыв умĕнчи чи пирвайхи тивĕçлĕхе кашни колхозăн чыслăн пурнăçа кĕртмелле.

Кĕрхи сивĕ те çăмăрлă кунсем пуçланаççĕ, хальхи уяр çанталăкпа туллин усă курмалла. Кăнтăрла та çĕрле те, алăпа та тата машинăсемпе те, чăн-чăнах фронтри пек хĕрӳлĕхпе аван çапмалла, пĕр кĕлте юлмиччен çапса илсе, колхоз амбарне кĕртмелле.

Аслă праздник çывхарса килет. Октябрьти революци пулнăранпа 26 çул тултарнă куна пирĕн çĕнĕ çĕнтерӳсемпе паллă тумалла. Паллах, патшалăха тырă парас, аван çапас тата ялхуçалăхĕнчи ытти ĕçсене вăл кун тĕлне пирĕн пĕтĕмпех вĕçлемелле. Çапла тума хушать пире фронт, çакăн пек тăван çĕршыв приказĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ОКТЯБРĔН 26-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Октябрĕн 26-мĕшĕнче пирĕн çарсем МЕЛИТОПОЛЬ хулинчен çурçĕрелле, хĕвеланăçнелле тата кăнтăр-хĕвеланăçнелле наступлени туса пынă, 7 километртан пуçласа 20 километр таран малалла куçнă, халăх пурăнакан 28 пункта тытса илнĕ. Вĕсем хушшинче Запорожье облаçĕнчи ВЕСЕЛОЕ ятлă район центрĕ, ТЕРПЕНИЕ, СПАССКОЕ, ДАЛЬНИЙ, УКРАИНКА, ТРУДОЛЮБОВКА, ЕЛИЗАВЕТОВКА, МАЛАЯ МИХАЙЛОВКА, ВОРОШИЛОВКА, АРБЕЙТАЛЬ, ВЛАДИМИРОВКА ятлă пысăк ялсем тата ТЕРПЕНИЕ чугун çул станцийĕ пур.

Пирĕн çарсем пыра-пыра çапнипе тăшман çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен калама çук пысăк çухату тӳснĕ.

ДНЕПР шывĕн кукăрĕнче, ДНЕПРОПЕТРОВСКРАН кăнтăр хĕвеланăçнерехре, пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, 7 километртан пуçласа 15 километр таран малалла куçнă, Днепропетровск облаçĕнчи СОЛЕНОЕ ятлă район центрне тата 30 яла ытла тытса илнĕ. Вĕсем хушшинче ЧЕРВОННАЯ ИВАНОВКА, ГАННО-ЗАЧАТОВКА, НИКОЛАЕВКА, СЕЛЕЦКАЯ, СУРСКО-ПОРОВСКОЕ, ВОЛОСКОЕ, ВАСИЛЬЕВКА, ЧУВИЛИНО, ГОНЧАРКА, АППОЛОНОВКА, ВИШНЕВЫЙ, ДНЕПРОСТАН ятлă пысăк ялсем пур.

КРИВОЙ РОГ енче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Вĕсем хушшинче МАЛИНОВКА, ВОДЯНА, ВАРВАРОВКА, БОЙКОВКА, ГУРОВКА, НОВАЯ ЛОЗОВАТКА, РОДИОНОВКА, ПОКРОВСКОЕ ятлă пысăк ялсем тата ШМАКОВО, КАРНАВАТКА чугун çул станцийĕсем пур.

Фронтăн ытти участокĕсенче вăйлă разведка тунă тата артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Октябрĕн 25-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 41 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 29 самолетне персе ӳкернĕ.

ОКТЯБРĔН 27-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Октябрĕн 27-мĕшĕнче ДНЕПР шывĕн анатри тăрăхĕнчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри районра пирĕн çарсем хаяррăн çапăçнă хыççăн ДНЕПР шывĕпе АЗОВ тинĕс хушшинчи фронтра тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă, унăн каялла чакакан çарĕсене хăваласа пырса, 10 километртан пуçласа 30 километр таран малалла куçнă, халăх пурăнакан 90 пункта ытла тытса илнĕ. Вĕсем хушшинче Запорожье облаçĕнчи ВАСИЛЬЕВКА, МИХАЙЛОВКА, АКИМОВКА ятлă район центрĕсем, СКЕЛЬКА, ОРЛЯНСК, ТИМОШЕВКА, МАТВЕЕВКА, НОВО-ИВАНОВКА, НОВО-УСПЕНОВКА, НОВАЯ АЛЕКСАНДРОВКА, ПЕТРОВКА, АЛЕКСАНДРОФЕЛЬД, 1-МĔШ ЧЕРНОВКА, ШЕЛЮГИ, ЕФРЕМОВКА, КИРИЛЛОВКА, ГОРЕЛОЕ ятлă пысăк ялсем тата ЧОКРАК, БУРЧАЦК, ПРИШИБ, ПЛОДОРОДИЕ, ФЕДОРОВКА, АКИМОВКА ятлă чугун çул станцийĕсем пур. Пирĕн çарсем пыра-пыра çапнипе каялла чакса, тăшман çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен калама çук пысăк çухату тӳсет.

ДНЕПР шывĕн кукăрĕнче, ДНЕПРОПЕТРОВСКРАН кăнтăр хĕвеланăçнерехре, пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, 6 километртан пуçласа 15 километр таран малалла куçнă, халăх пурăнакан 30 пункта ытла тытса илнĕ. Вĕсем хушшинче Днепропетровск облаçĕнчи КРИНИЧКИ ятлă район центрĕ, АДАМОВКА, ЕЛЕНОВКА, КАРНАУХОВСКИЕ ХУТОРА, НОВОСЕЛОВКА, СУРСКО-ЛИТОВСКОЕ, НОВО-НИКОЛАЕВКА, СУРСКО-МИХАЙЛОВКА, ПЕТРОВСКОЕ, ПРИВОЛЬНАЯ СЕРГЕЕВКА, ВОЛЬНЫЙ ятлă пысăк ялсем тата СУРСКОЕ, ПРИВОЛЬНОЕ ятлă чугун çул станцийĕсем пур.

КРИВОЙ РОГ енче пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине тата унăн контратакисене сирсе ярса, наступлени туса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ.

ВИТЕБСК хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă, 6 километртан пуçласа 10 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 50 пункта ытла тытса илнĕ. Вĕсем хушшинче ЧУРИЛОВО, ЛЮБКИ, ХАЛЮПЫ, ЗАЙКОВО, ЛЕШКОВО, ПОНИЗОВЬЕ, ДРОЗДЫ, ПАПОРОТНО, КАЗАКОВО, АВТУШКОВО, ЗАДУБРОВЬЕ ятлă пысăк ялсем пур. Çапла ĕнтĕ, НЕВЕЛЬПЕ УСВЯТЫ хушшинчи шоссе çулне тăшмантан тасатнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче вăйлă разведка тунă тата артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Октябрĕн 26-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 42 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 49 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Днепр шывĕн анатри тăрăхĕнчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем ăнăçлăн наступлени туса пынă. Веселое ятлă район центрне тытса илнĕ хыççăн пирĕн çăмăллăн куçакан чаçсем, хĕвеланăçнелле вирлĕн куçса пырса, лайăхлатнă виçĕ çула татнă, нумай çынна тыткăна илнĕ, 20 танк, хăй тĕллĕн çӳрекен 17 тупă, 120 хир туппи, ултă кĕпçеллĕ 12 миномет тытса илнĕ. Тăшмантан çар хатĕрĕсем тиенĕ нумай автомашинăсемпе лавсем тата пысăк кĕтӳсем тытса илнĕ. Германие каторгăна хăваласа каякан совет гражданĕсене 10 пин çынна ытла ирĕке кăларнă. Паян пирĕн çарсем Днепр шывĕнчен Азов тинĕсĕ патне çитичченех пĕтĕм фронтра тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та, каялла чакакан нимĕç çарĕсене хăваласа пырса, Акимовка ятлă район центрĕпе чугун çул станцине (Мелитополь хулинчен кăнтăртарахра), Васильевка тата Михайловка ятлă район центрĕсене (Мелитополь хулинчен çурçĕртерехре) тата 90 яла ытла тытса илнĕ. Кун каçиччен нимĕçсен 3.000 салтакĕпе офицерне çити вĕлернĕ, 28 танкне, 90 туппине пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. Пирĕн çарсем пыра-пыра çапнипе каялла чакса, тăшман хăйĕн артиллерине, миномечĕсене, боеприпасĕсене тата çар пурлăхне пăраха-пăраха хăварать.

Пирĕн авиаци, нимĕç çарĕсене пыра-пыра çапса, вĕсене пысăк çухату тӳстернĕ. Сывлăшри çапăçусенче кун каçиччен нимĕçсен 28 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Днепр шывĕн кукăрĕнче, Днепропетровскран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Тăшман, вăйлăн персе тăрса тата контратакăсем туса пырса, совет чаçĕсене чарма хăтланнă, анчах та, пысăк çухату тӳссе, каялла чакнă. Пирĕннисем 30 яла ытла, çав шутра Днепропетровск облаçĕнчи Криничкм ятлă район центрне, нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă. Çав ялсемшĕн пынă çапăçусенче нимĕç пехотине пĕр полка çити пĕтерсе тăкнă. Пĕр соединени чаçĕсем кăна тăшмантан 48 тупă, 40 миномет, винтовкăсемпе автоматсем нумай, боеприпассен 2 складне тата апат-çимĕç хунă 5 склада тытса илнĕ.

Совет авиацийĕ нимĕçсен Апостолово чугун çул тĕввинче пухăнса тăнă çар эшелонĕсем çине кăнтăрла та, çĕрле те бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнине пула тăшманăн техника тиенĕ нумай платформисемпе вагонĕсем сирпĕнсе кайнă е çĕмĕрĕлнĕ. Пушарсем нумай тухнă, пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă.

* * *

Кривой Рог енче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем, тăшман вăйлăн хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, темиçе яла тытса илнĕ. Нимĕçсем, çав ялсене каялла тытса илесшĕн пулса, танксен пысăк вăйĕсене контратакăна кĕртсе янă. Пирĕн артиллери тата гвардейски минометнăй чаçсем гитлеровецсен пур атакисене те сирсе янă, вĕсене пысăк çухату тӳстернĕ. Тепĕр участокра пирĕн боецсем пĕр ялта нимĕç пехотин батальонне çаврăса илнĕ. Гитлеровецсем çав ункăран тухма тем пекех тăрăшнă пулин те, каçалапа вĕсене пĕтĕмĕшпех аркатса тăкнă, чĕрĕ юлнисене тыткăна илнĕ. Трофейăсем тытса илнĕ. трофейăсем хушшинче 8 тупă, ултă кĕпçеллĕ 7 миномет, 42 пулемет тата боеприпассемпе апат-çимĕç склачĕсем пур.

Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче кун каçиччен нимĕçсен 11 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Витебскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман персе тăнине тата унăн инженерла йышлă чăрмавĕсене çĕнтерсе, 50 яла ытла тытса илнĕ. Невельпе Усвяты хушшинчи шоссе çулне тăшмантан пĕтĕмĕшпех тасатнă. Пĕр участокра пирĕн пĕр чаçăн боецĕсем нимĕçсен хирĕç тăмалли вăйлă тĕреклетнĕ тĕввине аркатса тăкнă, 600 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. 2 артиллери батарейине, 8 миномет тата боеприпассен 2 складне тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Карел-Финн ССР-ĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен «Советский Мурман» ятлă отрячĕ тăшман гарнизонне тапăннă. Партизансем 30 нимĕç салтакне ытла вĕлернĕ, апат-çимĕç складне тата бензин базине çунтарса янă. «Красный партизан» ятлă отряд икĕ ялта финн гарнизонĕсене аркатса тăкнă. Хаяррăн çапăçса, совет патриоччĕсем 60 белофинна çити вĕлернĕ. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнĕ.

* * *

Запорожье районĕнче нимĕçсен йышлă ушкăнĕсене тыткăна илнĕ. Нимĕçсен 333-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 618-мĕш полкăн 6-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Георг Рихтер çапла каласа панă: «Офицерсем пире çапла калатчĕç: фюрерăн пĕр утăм та каялла чакмалла мар, Запорожье плацдармне пĕр салтак тăрса юлмиччен хӳтĕлемелле текен приказĕ килнĕ, тетчĕç. Полк командирĕ çапла каларĕ: «Эпир кунтан каймастпăр, мĕншĕн тесен пирĕн позицисем никам пырса тĕкĕнмелле мар çирĕп, пирĕн вĕсене хӳтĕлеме вăй та çителĕклĕ. Кунта эпир хĕл каçатпăр», терĕ. Анчах эпир питĕ пысăк çухату тӳсрĕмĕр, çав вăхăтрах вырăссем ытла та хытă хĕсрĕç, эпир вара чăтса тăраймарăмăр. Сайралса çитнĕ ротăсем, хăраса ӳксе, тарма тытăнчĕç. Эпĕ 5-мĕш рота командирĕпе пĕрле суран çыхакан пункта çитиччен тартăм. Унта сурансланнисене питĕ нумай иле-иле пыратчĕç. Çав пункт патĕнче пĕр капитан таракан салтаксене тытса чарма хăтланса пăхрĕ. Пире пулăшма «тигрсем» килеççĕ, тесе кăшкăрчĕ, анчах та салтаксем ăна итлемерĕç, тĕрлĕ еннелле тарса саланчĕç». Нимĕçсен 335-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 683-мĕш полкăн 6-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Штельцер çапла каласа панă: «Салтаксен шухăш-кăмăлĕсем питĕ пусăрăнчăк. Пурте: эпир пĕтес патне çитнĕ, тесе шутлаççĕ. Пирĕн батальон хăйĕн позицийĕнчен виçĕ хутчен тарса кайрĕ. Офицерсем салтаксене персе пăрахассипе хăратса кăна пĕр вăхăтлăха чарса тăма пултарчĕç, анчах вырăссем пире пурпĕрех каялла ывăтса ячĕç, пире калама çук пысăк çухатусем тӳстерчĕç. Эпĕ нимĕнсĕр вилес мар терĕм, çавăнпа салтаксен пĕр ушкăнĕпе пĕрле тыткăна парăнтăм»

Укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейи

Лотерея билечĕсене республикăра 28.612.000 тенкĕлĕх сарнă

Укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейин билечĕсене республикăра 4 кун хушшинче 28.612.000 тенкĕлĕх сарнă, вăл шутран 19.740.000 тенкине çийĕнчех перекет кассисене хывнă. Уйрăмăн илсен, лотерея билечĕсене рабочисемпе служащисем хушшинче 4.779.000 тенкĕлĕх, колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче 23.833.000 тенкĕлĕх сарнă. Колхозниксемпе колхозницăсем лотерея билечĕсен укçине 18.806.000 тенкĕ тӳленĕ.

Лотерея билечĕсене сарас тĕлĕшпе малти вырăнта Сĕнтĕрвăрри районĕ, Шупашкар тата Канаш хулисем пыраççĕ. Тăвай, Калинино, Первомайски, Çĕмĕрле, Элĕк районĕсенче лотерея билечĕсене сарасси çителĕксĕр хăвартлăхсемпе пырать-ха

Канаш районĕ патшалăха тырă парса татрĕ

Октябрĕн 28-мĕшĕнче Канаш районĕ патшалăха тырă памалли плана пĕтĕмĕшпех пурнăçларĕ. Колхозсем халĕ 1944 çулшăн патшалăха авансла тырă параççĕ.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ ДОБРОДУШЕВ.

Райсовет исполкомĕн председателĕ АНТОНОВ.

И. В. Сталин юлташ Антони Иден господина йышăнни

Октябрĕн 27-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ Великобритани ют çĕршыв ĕçĕсен министрне Иден господина йышăннă.

Калаçура Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ, Великобританин Совет Союзĕнчи послĕ Керр господин тата Британи генерал-лейтенанчĕ Х. Исмей пулнă.

Çĕнтерӳшĕн, малалла!

(Хĕрлĕ ялавлă Балти флотĕнчи комсомолецсен çырăвĕ)

Пĕтĕм Союзри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзĕ 25 çул тултарнă кун эпир, Хĕрлĕ ялавлă Балтикăри Чăваш комсомолĕ шефа илнĕ комсомолец-артиллеристсем, сире пĕтĕм чĕререн хĕрӳллĕ салам яратпăр!

Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ питех те чаплă çĕнтерӳсем тунă кунсенче, тăванла республикăсен ывăлĕсем çума-çумăн тăрса паттăррăн çапăçнă вăхăтра эпир эсир пулăшса тăнин вăйне туятпăр, тылра та фронтри пекех ĕçлекенсемпе мухтанса савăнатпăр!

Сирĕн çитĕнӳсем пире çĕнĕ вăйхал хушса параççĕ, Ленинград фронтĕнче фашистла çĕлен-калтасене татах та вăйлăнрах çĕмĕрсе пыма пысăкрах ответлăх хураççĕ.

Хаклă пиччесемпе аппасем! Сирĕн хĕрӳ сăмахăрсемпе саламăрсем, фронтра ăнăçусем тума сунни ахаль юлмĕ. Эпир нимĕçсен тискер кайăкĕсене çĕнĕ вăйпа, Балтика тупписен хăватлă вăйĕпе çĕмĕрме тытăнăпăр, çакăнпа пĕрлех пирĕн мухтавлă снайперсем нимĕçсене ытларах вĕлерсе пыма тытăнĕç. Пирĕн боецсем 2.000 нимĕçе ытла тĕп тунă, вĕсенчен 1.014-шне пирĕн пилĕк снайпер пĕтернĕ.

Ленинла-Сталинла комсомол ретĕнче çитĕннĕ Валентин Калинин — 210 нимĕçе, комсорг Василий Васильев — 203 нимĕçе пĕтерсе тăкнă.

Снайперсемпе пĕрлех артиллери хĕçпăшалĕн мастерĕсем те кунран кунах ӳссе пыраççĕ. Комсомол çитĕнтернĕ Иванов лейтенантăн инçете перекен тупă кĕпçийĕ çинче халĕ ултă хĕрлĕ çăлтăр унăн мастерлăхне палăртса тăраççĕ, Эминов лейтенантăн туппи çинче — пилĕк хĕрлĕ çăлтăр.

Ленинла комсомол ретĕнче тăракансен пысăк пайне тăшмана хирĕç çапăçнă çĕрте паттăрлăхпа мухтавлăх кăтартнăшăн правительство наградисене — орденсемпе медальсем панă.

Хаклă юлташсем!

Эпир хамăрăн мĕнпур вăя Сирĕн шанчăка тӳрре кăларнă çĕре — нимĕç ирсĕрĕсене кашни кун пĕтерсе пынă çĕре, çар ĕçне пĕр ывăнмасăр вĕренсе пынă çĕре паратпăр. Пирĕн шухăш-кăмăлăмăрсем Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ хăйĕн приказĕнче лартнă задачăсене пурнăçа кĕртнĕ çĕре туртăнаççĕ.

Эпир Сире паян паракан сăмах ĕçре пурнăçланĕ. Çапла пулĕ тесе эпир сирĕн умăрта балтиецсен чысĕпе тупа тăватпăр! Пирĕн куçсем хĕвеланăçнелле пăхаççĕ, унта темиçе пин совет çыннисем хăйсене нимĕçсен пусмăрĕнчен хăтарас сехете кĕтеççĕ.

Умри мĕнпур йывăрлăхсене çĕнтерсе, хамăрăн çулпуç тата полководец кăтартнă çулпа малалла—хĕвеланăçнелле, çĕнтерӳ патне каяр!

Сывă пултăр пирĕн Тăван çĕршыв!

Сывă пулччăр пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ!

Аслă Сталина — мухтав!

Чаçри комсомолецсем хушнипе алă пуснă: старши лейтенант-орденоносец **Н. СМИРНОВ**, старши лейтенант-орденоносец **ЛЕБЕДЕВ**, снайпер-орденоносец **В. ВАСИЛЬЕВ**, пурĕ 15 сын.

Балти флотĕнчи комсомолецсен делегацийĕ Чăваш республикинче

Октябрĕн 27-мĕшĕнче пирĕн республикăн столицине—Шупашкара Хĕрлĕ ялавлă Балтика флочĕн Чăваш комсомолĕ шефа илнĕ чаçĕн делегацийĕ килчĕ. Делегаци составĕнче чаçăн комсоргĕ старши лейтенант-орденоносец **А. И. Лебедев**, батарея комсоргĕ, 2-мĕш статья старшини, чаçри паллă снайпер **В. В. Васильев** (вăл 203 нимĕçе вĕлернĕ), старши краснофлотец **С. Ф. Бугров** тата 1-мĕш статья старшини **Н. Н. Мурашев**.

Вĕсен кăкăрĕ çинче ССР Союзĕн орденĕсемпе медалĕсем, Кашниех Ленинграда мухтавлăн хӳтĕленĕ çĕрте çапăçнă.

Вĕсем пирĕн республикăри промышленноçпа транспорт предприятийĕсенче, колхозсемпе шкулсенче пулаççĕ. Паян Ленинла-Сталинла Комсомол 25 çул тултарнă ятпа Шупашкарта пулакан чаплă ларура пулаççĕ.

—o—

ТЫРПУЛ ХАТĔРЛЕМЕЛЛИ ПЛАНА СРОКЧЕН ПУРНĂÇЛАССИШĔН ТАТА СТАЛИН ЮЛТАША ПУРИНЧЕН МАЛТАН РАПОРТ ПАМА ПРАВО ИЛЕССИШĔН РАЙОНСЕМ ХУШШИНЧЕ ПУÇЛАННĂ СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТУ ОКТЯБРĔН 25-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

Районсем	Миçемĕш вырăн йышăннă
Етĕрне	1
Вăрнар	2
Шупашкар	3
Вăрмар	4
Сĕнтĕрвăрри	5
Калинино	6
Канаш	7
Куславкка	8
Элĕк	9
Сĕнтĕр	10
Советски	11
Шăхасан	12
Çĕрпӳ	13
Красноармейски	14
Хĕрлĕ Чутай	15
Ишлей	16
Октябрьски	17
Елчĕк	18
Йĕпреç	19
Тăвай	20
Комсомольски	21
Улатăр	22
Первомайски	23
Çĕмĕрле	24
Кувакино	25
Чкаловски	26
Шăмăршă	27
Пăрачкав	28

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ КОЛХОЗСЕНЧЕ АВĂН ÇАПАС ТАТА КĔРХИ ÇĔРТМЕ ТĂВАС ĔÇСЕМ ОКТЯБРĔН 25-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПУЛСА ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Авăн çапнă	Кĕрхи çĕртме тунă
Вăрнар	100,0	100,5
Йĕпреç	100,0	54,6
Красноармейски	100,0	64,2
Кувакино	100,0	24,1
Первомайски	100,0	61,7
Шупашкар	100,0	75,9
Çĕмĕрле	100,0	58,8
Етĕрне	100,0	82,6
Канаш	99,8	51,1
Ишлей	99,5	57,9
Комсомольски	99,4	63,9
Улатăр	99,4	53,4
Хĕрлĕ Чутай	99,4	49,4
Шăмăршă	99,4	59,1
Сĕнтĕр	99,2	67,5
Шăхасан	99,0	53,7
Элĕк	98,9	77,4
Советски	98,7	60,6
Вăрмар	98,7	72,1
Чкаловски	98,7	52,9
Калинино	98,6	73,5
Çĕрпӳ	98,2	58,8
Елчĕк	98,2	72,2
Куславкка	98,0	78,1
Октябрьски	96,4	69,3
Сĕнтĕрвăрри	95,8	77,7
Пăрачкав	95,6	45,5
Тăвай	95,2	50,2
Шупашкар хули	100,0	97,2
ЧАССР тăрăх	99,4	63,2
Октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне пулнă	96,6	56,1

Паян Ленинла-Сталинла комсомол 25 ҫул тултарчӗ

„Пирӗн пурин те пӗр тӗллев—совет ҫӗрне нимӗҫ захватчикӗсенчен тасатасси, совет ҫыннисен юнӗпе куҫҫулӗшӗн гитлерла ирсӗрсене пӗр шеллемесӗр тавӑрасси

(Совет Союзӗнчи комсомолецсемпе ҫамрӑксем Сталин юлташ патне янӑ ҫыруран)

ХӖРЛЕ ЯЛАВЛӐ БАЛТИ ФЛОЧӖ. Ӳкерчӗк ҫинче: Ленинград хулине мухтавлӑн хӳтӗлекен, Чӑваш халӑхӗн паттӑр ывӑлӗ, пулеметчик кӗҫӗн сержант М. Ф. Семенов. Вӑл тӑшманӑн икӗ самолетне—„Юнкерс—88“ тата „Фиат“ персе ӳкернӗ.
Е. ЛОСИН фото-ӳкерчӗкӗ (ТАСС фотохроники).

Ӳкерчӗк ҫинче: Чӑваш хӗрӗ Мария Ванькова (Первомайски районран). Нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ хӑюллӑ кӗрешнӗшӗн ӑна „За отвагу“ медаль панӑ.
Н. ТИХОНОВ фото-ӳкерчӗкӗ.

ПАТШАЛӐХА ҪИТЕС ҪУЛШӐН ТЫРӐ ПАРАҪҪӖ. Ӳкерчӗк ҫинче: Чкаловски районри Тимешри „Хӗрлӗ Октябрь“ колхоз ҫамрӑкӗсен хӗрлӗ обозӗ.
Н. ДАНИЛОВ фото-ӳкерчӗкӗ.

Хӑюллисен взводне ертсе пытӑм

1941 ҫулхи июль. Эпӗ ҫак уйӑха ӗмӗр-ӗмӗр асра тытӑп. Вӑл манӑн чӗрере нихӑҫан ҫухалми йӗр хӑварчӗ. Этем юнне ӗҫме вӗреннӗ Гитлерӑн ҫарӗсем тырпуллӑ Украина хирне таптани— тӑшмансем манӑн тӑван колхоз ҫине ал тӑснӑ пекех туйӑнатчӗ. Тӑван ҫӗршыва хӳтӗлесе хӑварас, тӑшмана ҫӗмӗрсе тӑкас кӑмӑл пуҫӑмран тухма пӗлместчӗ.

Ҫав ӗмӗтпе эпӗ тӑшманпа ҫапӑҫма тухса кайрӑм. Фронта ҫитсенех, мана разведчиксен взводне ертсе пыма хушрӗҫ. Командовани эп ертсе пыракан взвода комсомолецсен взвочӗ ретчӗ.

Пире Украина хирӗнчи хаяр ҫапӑҫусенче пулма лекрӗ. Манӑн хӑюллӑ разведчиксем чӑн-чӑн улӑп-паттӑрсем пекех ҫапӑҫатчӗҫ. Пӗррехинче пирӗн чаҫсем тӑшмана хирӗҫ наступлени пуҫарса ячӗҫ. Тӑшман совет воинӗсен ҫулне пулеметран вут-хӗм тӑкнипе пӳлсе лартма тапаҫланса пӑхрӗ. Пуҫа ҫӗклесе пӑхма та май ҫук. Анчах, темӗн пек йывӑр пулсан та, тӑшмана чарса лартмалла. Хыҫра—Мускав, тӑван ҫӗршывӑн чӗри. Тӑшман дзотне мӗнле майпа та пулин аркатмалла, малалла кайма ҫул уҫмалла. Ҫак ответлӑ задачӑна пурнӑҫлама эпӗ ертсе пыракан комсомолецсен взводне хушрӗҫ.

Каҫхине, тӑшман сисиччен, разведчиксене дзот патне илсе ҫитертӗм. Ҫитсенех гранатӑсем хатӗрлеме хушрӑм.

Кӗҫех тӑшман вут тӑкса тӑракан йӑва ҫине ик-виҫӗ граната вӑркӑнчӗ, ҫавӑн хыҫҫӑнах тӑшманӑн пулемет йӑви кӗрслетсе сирпӗнчӗ.

Тепре тата ҫапӑҫма хатӗрленсе выртрӑмӑр. Фашистсен бомбардировщикӗ пирӗн боецсем тӗлӗнче пулеметран персе ҫӳрерӗ. Эпӗ, меллӗнрех выртса, бомбардировщик ҫине винтовкӑран тӑватӑ хутчен петӗм. Фашистсен ҫӑхане вут хыпса илчӗ, вӑл ҫавӑнтах ҫӗре ӳкрӗ.

Тӑшманӑн «Юнкерс—88» йышши бомбардировщикне винтовкӑран персе ӳкернӗшӗн командовани мана «Отечественнӑй вӑрҫӑн 1-мӗш степень» орденне пама тӑратрӗ.

Эпӗ Красноармейски районри Йӑлӑм ялӗнче ӳссе ҫитӗннӗ. Халӗ, йывӑр аманнӑ хыҫҫӑн, вӑхӑтлӑха «Хӗрлӗ хӗвелтухӑҫ» колхозра канатӑп.

В. АНТОНОВ.

В. Антонов.

Стихван Шавлы

КОМСОМОЛЕЦСЕН МАРШӖ

Пире ҫӗнӗ ӗмӗр ҫӗкленӗ,
Ҫуралнӑ эпир ҫуркунне,
Вӗрентнӗ пире аслӑ Ленин,
Кӑтартнӑ ҫӗн пурнӑҫ ҫулне.

Хушса юрламалли:
Комсомолец, харӑс ут,
Ҫамрӑк ҫар, кӗрле!
Чӗрӳ сирпӗттӗр хӗм-вут
Партипе пӗрле!

Пире аслӑ Сталин ӳстерчӗ,
Вӑл уҫрӗ шкулсен алӑкне,
Атте пек пӑхса ҫитӗнтерчӗ,
Вӑл кӳртрӗ ҫӗн пурнӑҫ суртне.

Хушса юрламалли...

Эпир ҫирӗп хурҫӑ шӑратнӑ,
Вӗретнӗ Урал чугунне,
Хастарлӑн якатнӑ, хӑпартнӑ
Ҫӗршывӑн хӗрӳ кирпӗчне.

Хушса юрламалли...

Тӑван пиччепе юнашаррӑн
Халь тухрӑмӑр юнлӑ вӑрҫа,
Акка-йӑмӑксем те патварррӑн
Утаҫҫӗ пӗр харӑс тӑрса.

Хушса юрламалли...

Пире ҫӗнӗ ӗмӗр ҫӗкленӗ,
Пире ҫӗнӗ пурнӑҫ чӗнет,
Вӗрентнӗ пире манми Ленин
Халь Сталин пире вӗрентет.

Комсомолец, харӑс ут,
Ҫамрӑк ҫар, кӗрле!
Чӗрӳ сирпӗттӗр хӗм-вут
Партипе пӗрле!

Чаплӑ уява—пирӗн парнесем

КӲКЕҪ. Уява хатӗрленнӗ май, комсомолецсен 17 бригади ҫӗр ҫыхвӑрмасӑр авӑн ҫапрӗ. Бригадӑсене комсомол организацийӗсен секретарӗсем хӑйсем ертсе пычӗҫ. Патшалӑха тырӑ парас тӗлӗшпе 68 колхозра транспорт бригадисем ӗҫлерӗҫ. Вӗсем хӗрлӗ обозсемпе хатӗрлев пунктне 2.000 т. ытла тырӑ леҫнӗ.

«Крахмал», «Зерно», «Коминтерн» колхозсенчи транспорт бригадисем мухтава тивӗҫлӗ ӗҫлерӗҫ. Ҫапла, мӗнпур вӑя мобилизациленипе, пирӗн район октябрӗн 16-мӗшӗ тӗлне патшалӑха тырӑ парса татрӗ. Халӗ 1944 ҫулшӑн паратпӑр. Ҫавӑн пекех районри пур колхозсем те авӑн ҫапса пӗтерчӗҫ.

Уява хатӗрленнӗ вӑхӑтра ҫамрӑксем хушшинче лекцисемпе докладсем чылай ирттертӗмӗр. Октябрь уйӑхӗнче кӑна 90 ҫамрӑк комсомола кӗчӗҫ. Сталин юлташӑн «Совет Союзӗн Отечественнӑй аслӑ вӑрҫи ҫинчен» ятлӑ кӗнекине вӗренме 24 кружок организациленӗ.

А. СМИРНОВА,
ВЛКСМ райкомӗн секретарӗ.

Фронтпа тӑван ҫӗршыв умӗнчи тивӗҫлӗхе туйса

КАЛИНИНО. Комсомолӑн Ускапари «Броневик» колхозри организацийӗнче вӑрҫӑ пуҫланнӑ вӑхӑтра 8 комсомолец кӑна пулнӑ. Комсомол 25 ҫул тултарнӑ тӗле унӑн йышӗ 32 ҫынна ҫитрӗ. Комсомолецсем пурте пекех колхозри ответлӑ ӗҫсенче ӗҫлеҫҫӗ: Белков—3-мӗш бригадӑн бригадирӗ, Сорокина — вылъӑх пӑхать, П. Сорокин — учетчик, Илларионова—конюх.

Ытти комсомолецсем те колхозра тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. П. Спиридонов кӑҫал 300 ӗҫкунӗ ытла тунӑ. Комсомолецсем колхозниксене пример кӑтартаҫҫӗ. Комсомол 25 ҫул тултарнӑ уяв тӗлне колхоз патшалӑх умӗнчи пур обязательствӑсене те пурнӑҫларӗ. Килес ҫулхи обязательство шучӗпе патшалӑха 100 центнер тырӑ, 38 центнер купӑста, 45 центнер какай панӑ. Комсомолецсем фронтовиксене 50 килограмм какай, 10 килограмм пыл ярса пачӗҫ.

Б. ШОРНИКОВ.

В. Александрова.

КОМСОМОЛ ПУЛӐШНИПЕ

Эпӗ 1924 ҫулта ҫуралнӑ. Атте эпӗ пӗчӗккӗ чухнех вилнӗ. Анне коммунистка, Шупашкарти пӗр заводра ӗҫлет.

Шупашкарти табак фабрикинче эпӗ 1942 ҫултанпа ӗҫлетӗп. Малтанах пачкӑсем хатӗрлекен цехра ӗҫлерӗм. 1943 ҫулта Ленинла-Сталинла комсомол ретне кӗтӗм. Кун хыҫҫӑн общественӑллӑ-политикӑллӑ ӗҫе активлӑн хутшӑнса ӗҫлекен пултӑм. Мана часах пирус гильзисем хатӗрлекен машинӑсен механикӗн ученицӗ пулса ӗҫлеме куҫарчӗҫ.

Эпӗ, Ленинла-Сталинла комсомол 25 ҫул тултарнӑ ятпа Сталинла вахтӑна тӑрса, ӗҫ нормине 170—180 процент тултарса пытӑм. Производство ӗҫне тӑрӑшса вӗренетӗп, халӗ техминимума вӗренетӗп.

Кӑҫал всевобуч пунктне ҫӳресе, телеграфистка пулма отлично вӗренсе тухрӑм. Сталин юлташӑн «Совет Союзӗн отечественнӑй аслӑ вӑрҫи ҫинчен» ҫырнӑ кӗнекине хам тӗллӗн вӗренетӗп.

Производствӑра-и, килте-и, общественӑллӑ ӗҫре-и,—пур ҫӗрте те эпӗ комсомол пулӑшнине туятӑп. Комсомол пулӑшнипе эпӗ хамӑн квалификацие татах та ӳстерсе пырӑп.

В. АЛЕКСАНДРОВА.

ЧӐВАШ ҪАМРӐКӖСЕМ—ФРОНТА

★ Республикӑри комсомолецсемпе союзра тӑман ҫамрӑксем нумай вӑхӑт хушши перекетлесе усранӑ 11 миллион укҫине боевой самолетсен «Комсомолец Чувашии» ятлӑ эскадрильне тума пачӗҫ. Ҫак паркӑтарлӑ ӗҫшӗн вӗсене аслӑ ҫулпуҫӑмӑр Сталин юлташ саламларӗ, Хӗрлӗ Ҫар ячӗпе тав турӗ.

★ Пӗр бронепоезд, «Пионер Чувашии» ятлӑ танк туянса фронта ӑсатнӑ, самолетсен «Осоавиахим Чувашии» ятлӑ звенине тума 1.130.000 тенкӗ укҫа пухнӑ.

★ Патшалӑха тырӑ парас тӗлӗшпе туса ирттернӗ икӗ воскресникре ялсенчи комсомолецсемпе ҫамрӑксем хатӗрлев пункчӗсене 26.245 лавпа 77.600 центнер тырӑ, ҫӗрулми тата пахча-ҫимӗҫ турттарса пынӑ.

★ Кӑҫалхи виҫҫӗмӗш кварталта тӑван ҫӗршыври металлурги завочӗсем валли 8.119 тонна тимӗр-тӑмӑр пухса тиесе ӑсатнӑ.

★ Хӗрлӗ ҫар боецӗсем тата партизансем валли ӑшӑ япаласемпе парнесем пухас ӗҫе темиҫе ҫӗр комсомолец хутшӑннӑ. Иртнӗ ҫулхи май уйӑхӗнче пӗр участокри партизансем патне 20 мӑшӑр атӑ, 100 мӑшӑр нӗске, япаласем хумалли михӗсем 140 ытла, 42 бритва (прибӧрӗсемпе пӗрлех), 250 катӑк супӑнь тата табак, енчӗксем, турасем, ҫӗҫӗсем, кӗпе-йӗмсем чылай пухса янӑ.

★ Нимӗҫ оккупанчӗсенчен ирӗке кӑларнӑ районсенчи библиотекӑсем валли 12.000 кӗнеке пухнӑ.

ВӐРМАН ЕНӖШ ҪАМРӐКӖСЕМ

Шӑматкун каҫхине комсомол организацин секретарӗ Михаил Петров колхозри ҫамрӑксене пухрӗ. Вӗсенчен вуниккӗшӗ—комсомолецсем. Петровӗ хӑй темле пӗрре те халиччен хи пек хаваслӑ мар, салхуллӑ та шухӑшлӑ.

— Юлташсем! — терӗ вӑл лӑпкӑн ҫеҫ. — Эпир, ҫакӑнта ларакан ҫамрӑксем, тӑван ҫӗршыв умӗнче каламаҫук пысӑк парӑмлӑ. Пирӗн «Свобода» колхоз патшалӑха тырӑ памалли обязательствӑна сентябрӗн 5-мӗшӗ тӗлне 2 процент ҫеҫ тултарнӑ. Ҫак намӑса эпир текех чӑтма пултараймастпӑр. Пирӗн ыран, вырсарникун, хатӗрлев пунктне сахалтан та 40-50 лав тырӑ леҫмелле. Воскреснике пур комсомолецсемпе ҫамрӑксен те хутшӑнмалла. Килӗшетпӗр-и?

— Килӗшетпӗр! — пӗр ҫын пек харӑс ответлерӗҫ ҫамрӑксем. Петров юлташ ҫавӑнтах кашнинех уйрӑм ӗҫсем хушрӗ.

«Свобода» колхозра виҫӗ бригада. Бригадирсем пурте — комсомолецсем. Вӗсем, пухуран тухсан, тӳрех государствӑна тырӑ леҫме каймалли урапасемпе лаша таврашӗсене хатӗрлеме чупрӗҫ. Конюхсене тырӑ леҫме каймалли лашасене лайӑхрах ҫитерсе шӑварасси ҫинчен асӑрхаттарчӗҫ. Ытти комсомолецсемпе ҫамрӑксем колхозниксене ҫак ӗҫе мобилизацилеме тухса вӗҫтерчӗҫ.

Тепӗр кунне вара «Свобода» колхозран хатӗрлев пунктне 42 лав тырӑ ячӗҫ. Лавсем ҫинче ҫамрӑксем, хӗрачасем, ватӑ колхозниксем те пӳр. Малти урапа ҫинче — хӗрлӗ ялав. Ҫамрӑксем хаваслӑ юрӑ шӑрантараҫҫӗ.

Ҫав кунхине «Свобода» колхоз патшалӑха тырӑ памалли обязательствӑн 27 процентне пурнӑҫларӗ. Ҫапла, колхозри комсомолецсем кӑҫал, виҫӗ хутчен воскресник ирттерсе, патшалӑх умӗнчи тырпул, пахча-ҫимӗҫ парӑмӗсене кӗске вӑхӑтра, срокчен татрӗҫ.

* * *

Комсомол организацин секретарӗ Михаил Петров—отечественнӑй вӑрҫӑ инвалидӗ. Вӑл Вӑрман Енӗш ялсовет исполкомӗн председателӗ пулса ӗҫлет. Ялсоветри иртнӗ ҫулсенче кая юлса пыракан «Свобода», «Звезда» колхозсем кӑҫал вӑл тӑрӑшнипе районти малти вырӑна тухрӗҫ. Петров комсомол организацин ӗҫне ҫӗнӗлле йӗркелесе ячӗ.

Кунти комсомолецсем колхозри пур ӗҫсене те анлӑн хутшӑнаҫҫӗ. Тырӑ вырнӑ, авӑн ҫапнӑ вӑхӑтра Сергеевпа Петров комсомолецсем ытти колхозниксене пример кӑтартрӗҫ, вӗсене тата хастарлӑнрах ӗҫлеме хавхалантарса пычӗҫ. Комсомолецсем хӑйсен ӗҫне ҫирӗп план тӑрӑх туса ирттереҫҫӗ. Вӗсем кӑҫал колхозниксем хушшинче 300 хут ытла тӗрлӗрен калаҫусем ирттернӗ. Стена хаҫачӗсем йӗркеллӗ кӑларса тӑраҫҫӗ.

Петров юлташ хӑй агитациллӗ-анлантарулла ӗҫе кӑтартуллӑн туса пырать. Ӗҫ патӗнче-и, урамра-и, колхозниксемпе ӑҫта тӗл пулнӑ — ҫавӑнта вӑл фронтри хыпарсем ҫинчен, хӑйсен колхозӗнчи ӳсӗмсемпе ҫитменлӗхсем ҫинчен калаҫа кӑтартать, малашне мӗн тумалли ҫинчен ӑнлантарать, кӑтартусем парать. Ҫапла майпа ӗнтӗ колхозниксене ӗҫлеме хавхалантарать.

Комсомолка Мария Степанова — финагент. Хӑйӗн ӗҫне вӑл тӳррӗн, тӑрӑшса туса пырать, укҫа-тенкӗ пухас ӗҫе колхозниксем хушшинче ӑнлантарулла ӗҫпе ҫыхӑнтарать. Ялсоветӗ укҫа-тенкӗ пухмалли 3-мӗш кварталти плана сентябрӗн 20-мӗшӗ тӗлнех 156 процент тултарнӑ. Халӗ кунта ялхуҫалӑх налогне тата ытти парӑмсене тӳлесе татман пӗр колхозник те ҫук.

«Свобода» тата «Звезда» колхозсенче колхоз хуҫалӑхӗпе туприсене, ял хушшинчи йӗркелӗхе сыхлама комсомолецсем ятарласах уйрӑм пост тунӑ. Вӗсем сыхӑ та ҫивчӗ пулнипе, кӑҫал колхоз пурлӑхне ҫаратма хӑтланакан тата ытти вӑрӑ-хурахсене тытнисем те пулнӑ. Уншӑн колхозниксем комсомолецсене мухтаса тав тӑваҫҫӗ.

Ленинла-Сталинла комсомол 25 ҫул тултарнине уявлама хатӗрленнӗ май, кунти комсомол организацийӗ хӑйӗн ӗҫне татах та ытларах вӑйлатса ячӗ. Комсомолецсем хастарлӑн пуҫарса пынипе, ялсоветри колхозсем октябрӗн 15-мӗшӗ тӗлне ялхуҫалӑх ӗҫӗсене пӗтӗмӗшпех туса ҫитернӗ, кӗрхи ҫӗртме туса пӗтернӗ. Выльӑх-чӗрлӗх фермисене хӗле валли лайӑх хатӗрленӗ.

Юбилей тӗлне комсомолецсем комсомолӑн паттӑрла историне вӗреннӗ. Сталин юлташӑн «Совет Союзӗн Отечественнӑй аслӑ вӑрҫи ҫинчен» ҫырнӑ кӗнекине вӗренмелли кружок уҫнӑ. Унта пур комсомолецсем те ҫӳреҫҫӗ.

Комсомолецсем политикӑллӑ пӗлӗве ӳстерсе пынине, ӗҫри пуҫарӑвӗсене анлӑлатнине, дисциплинӑна ҫирӗплетнине курса, ытти ҫамрӑксем те вӗсем еннеллех туртӑнаҫҫӗ. Кӑҫал комсомолӑн «Свобода» колхоз ҫумӗнчи организацине татах 11 ҫын ҫӗнӗрен хутшӑнчӗҫ.

Ҫамрӑксем ҫар ӗҫне те ҫине тӑрсах вӗренеҫҫӗ, тӑван ҫӗршывӑн паттӑр та хӑюллӑ сыхлавҫисем пулма хатӗрленеҫҫӗ. Комсомолка Елена Шевелева ҫак кунсенче хӑй ирӗкӗпе ҫар училищине вӗренме тухса кайрӗ.

Комсомолецсем уяв ячӗпе фронтри боецсем патне уяв кучченеҫӗсем, ӑшӑ тумтирсем пухса ячӗҫ.

СТЕПАН АСЛАН.

ШӐХАСАН. (Хамӑр корр.).

Комсомола кӗреҫҫӗ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Ленинла-Сталинла комсомол 25 ҫул тултарнине кӗтсе илме хатӗрленнӗ май пирӗн комсомол организацийӗн ӗҫӗ чылай лайӑхланчӗ. Вӑхӑтра авӑн ҫапса тата ҫӗрулми кӑларса пӗтерес, государствӑна тырӑ парса татас тесе, комсомолецсем кунне-ҫӗрне пӗлмесӗр ӗҫлерӗҫ. Ҫавӑнпа «Трактор» колхоз кӑҫал государство умӗнчи обязательствӑсене вӑхӑтра пурнӑҫларӗ. Комсомол авторитечӗ те ӳсрӗ. Ҫакна курса ҫамрӑксем комсомола кӗме заявленисем параҫҫӗ. Ҫак кунсенче 12 ҫамрӑка комсомола илнӗ.

Ют ҫӗршывсенче

ИТАЛИРИ ВӐРҪӐ ӖҪӖСЕМ

ЛОНДОН, октябрӗн 26-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен Ҫурҫӗр Африкӑри ҫарӗсен штабӗ ҫапла пӗлтерет: Америкӑн 5-мӗш армийӗн фронтӗнче патрульсем активлӑн кӗрешеҫҫӗ. Пӗтӗм фрончӗпех малалла куҫнӑ. Франколизе, Рависканина тата Роккета ятлӑ пунктсене йышӑннӑ. Англин 8-мӗш армийӗн фронтӗнче патрульсем ӑнӑҫлӑн кӗрешнӗ, йывӑр условисенче малалла куҫнӑ. Бояно, Спинете, Петрелла тата Палата ятлӑ пунктсене тытса илнӗ.

Енер Ҫурҫӗр Африкӑри сывлӑш ҫар вӑйӗсен инҫене вӗҫекен авиацийӗ Поддорицӑри (Кӑнтӑр Югославия) аэродрома тапӑннӑ. Октябрӗн 25-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле Италин хӗвелтухӑҫ ҫыранӗпе хӗвеланӑҫ ҫыранӗ хушшинчи районран ҫурҫӗртерехре ҫулсемпе чугун ҫул объекчӗсене атакӑланӑ.

ЛОНДОН, октябрӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС). Официальнӑй йӗркепе пӗлтернӗ тӑрӑх, союзниксен ҫарӗсем ӑнӑҫлӑн малалла тапӑнса пыраҫҫӗ. Темиҫе вырӑнта тӑшман каялла чакать, анчах тӗп районсенче хаяррӑн хирӗҫ тӑрать.

Союзниксен авиацийӗ тӑшманӑн ҫар объекчӗсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ.

Рейтер агентстви пӗлтерне тӑрӑх, Апенин тӑвӗсен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫ айккинче союзниксем нимӗҫсен пӗтӗм оборонине хӑратса тӑраҫҫӗ.

ФРАНЦИРИ ЗАБАСТОВКӐСЕМ

ЛОНДОН, октябрӗн 25-мӗшӗ. (ТАСС). АФИ агентстви ҫапла пӗлтерет: Францири промышленность предприятийӗсенче забастовкӑсем пулса иртеҫҫӗ. Виши влаҫӗсем полициллӗ мерӑсем йышӑннӑ пулсан та, забастовкӑна хутшӑннӑ рабочисем ӗҫлеме тытӑнма килӗшмеҫҫӗ.

САЛОНИКӐРА ВЫҪӐПА АПТӐРАКАН ХАЛӐХӐН ДЕМОНСТРАЦИНЕ ПӐШАЛПА ПЕНӖ

СОФИЯ, октябрӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС). Болгарире тухакан «Утро» хаҫат ҫапла ҫырать: Греци халӑхӗ выҫӑ пурӑнать. Ҫынсем, пӗлтӗрхи пекех, халран кайнипе урамсенчех ӳкеҫҫӗ. Продуктсем тата пурне те кирлӗ таварсем пачах ҫук. Салоникӑра октябрӗн 8-мӗшӗнче выҫӑ пурӑнакан халӑх демонстраци тунӑ. Темӗн пысӑкӗш ушкӑнсем, ҫав шутра хӗрарӑмсемпе ачасем те, хула хӗррисенчен хула варринелле кайнӑ. Германин полевой жандармерийӗ демонстрантсене салатса яма хӑтланнӑ. Анчах, пӑшалпа усӑ курнӑ пулин те, салатса ярайман. Вара влаҫсем, демонстрацие пӗтерсе лартас тесе, сывлӑшран тапӑнни ҫинчен пӗлтернӗ. Хулари мӗнпур магазинсене, Германи влаҫӗсем уҫма ирӗк парличчен, хупса лартнӑ.

ЯПОНИ ПАРЛАМЕНЧӖН 83-мӗш ЧРЕЗВЫЧАЙНӐЙ СЕССИНЕ УҪНИ

ТОКИО, октябрӗн 25-мӗшӗ. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, паян ирхине Япони парламенчӗн 83-мӗш чрезвычайнӑй сессийӗ уҫӑлнӑ. Сесси виҫӗ кун пырать. Вӑл 14 законопроект, ҫав шутра хӗҫпӑшал тӑвакан компанисем ҫинчен калакан законпроекта, йышӑнмалла.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧӐВАШ АССР-ӖНЧИ ӖҪ РЕЗЕРВӖСЕН УПРАВЛЕНИЙӖ ҪАК ФЗО ШКУЛӖСЕНЕ ВӖРЕНМЕ ИЛМЕ ПУҪЛАНИ ҪИНЧЕН ПӖЛТЕРЕТ

Шупашкарти 9-мӗш №-лӗ шкула, адресӗ — Кузнечная, 20; Шупашкарти 7-мӗш №-лӗ шкула, адресӗ — Чапаевски поселок, 22; Шупашкарти 11-мӗш №-лӗ шкула, адресӗ — Заводская, 34; Ҫӗмӗрлери 1-мӗш №-лӗ шкула, адресӗ — гор. Шумерля, ул. Ленина, 1; Улатӑрти 5-мӗш №-лӗ шкула, адресӗ — гор. Алатырь, ул. Ленина, 26; Канашри 6-мӗш №-лӗ шкула, адресӗ — гор. Канаш, поселок Вагоноремонтного завода.

ФЗО шкулӗсене 15—17 ҫулхи ҫамрӑксене илеҫҫӗ.

ФЗО шкулӗсенче вӗренекенсене укҫасӑрах тумтир, атӑ-пушмак, кӗпе-йӗм параҫҫӗ, общежитире усраҫҫӗ, столовӑйра кунне виҫӗ хутчен апат ҫитереҫҫӗ.

Заявленисене шкул директорӗ ячӗпе малта кӑтартнӑ адрессемпе ямалла.

Тӗплӗнрех пӗлес тесен, кӑтартнӑ шкулсенчен ыйтса пӗлмелле.

ЧӐВАШ АССР-ӗнчи ӖҪ РЕЗЕРВӐСЕН УПРАВЛЕНИЙӖ.

Вӑрман ӗҫлекенсемпе сулӑ юхтаракансен союзӗн Обкомне пӗччен пурӑнакансем валли тата ҫемьеллӗ ҫынсем валли хваттерсемпе пӳлӗмсем кирлӗ. Тӳлев укҫи—калаҫса татӑлнӑ тӑрӑх.

Ҫак адреспа ыйтса пӗлмелле: гор. Чебоксары, ул, Максима Горького, 23. Тел. 4—58.

Шупашкарти Водопьянов ячӗпе хисепленекен тир-сӑранпа атӑ-пушмак комбинатне кочегарсем, техничкӑсем, рабочисем кирлӗ.

Пӗччен пурӑнакансем валли общежити пур. Апат столовӑйра ҫитереҫҫӗ. Ҫӑкӑр комбинат ларекӗнче параҫҫӗ.

Ҫак адреспа ыйтса пӗлмелле: гор. Чебоксары, ул. Ворошилова, 27. Тел. 0—91.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редакци секретарӗн — 4—26, парти пурнӑҫ пайӗн — 3—99, промышленноҫпа ялхуҫалӑх пайӗн—5—31, издательство конторин—0—23

НТ 1141 — Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. 6 53 84 п. л